# «Эпир – ҫут ҫанталăк ачисем»

**Ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш наци библиотекин пĕр пӳлĕмĕнче Чăваш халăх художникĕн Владимир Агеевăн «Константин Иванов яш-кĕрĕм ваййинче» картинин куравĕ уҫăлчĕ. Ун чухне май килменрен тепĕр кунне ӳнерҫĕн ĕҫне пырса куртăмах. Агеев картинисене тӳрех палласа илме пулать. Унăн хăйĕн алли, тавра курăмĕ, манерлĕхĕ. Ҫакна чăвашсен паллă ӳнерҫисем тахҫанах асăрханă.**

«Константин Иванов яш-кĕрĕм ваййинче» картина умне пырса тă-тăм. Вăл ыттисенчен уйрăмраххине тӳрех палăртмалла. Тĕссен ылмашăвĕ таҫта аякка, урăх ҫĕре чĕнет пек. Вăл – вĕҫĕ-хĕррисĕр. Агеев сăнарланă тӳпе лăпкăлăхра тĕлĕрмест, вĕҫĕмсĕр ҫаврăнать, йыхăрать, ĕмĕрĕн тĕрлĕ юхăмĕнче пулса курма чĕннĕн туйăнать. Ӳнерҫĕ сăррисем ҫут ҫанталăкăн тĕрлĕ енлĕ сăн-сăпатне куҫса кĕвве ҫаврăнаççĕ. Вăйă картинче ташă ҫеммипе хуҫа-кан хĕрсен, яшсен сăнарĕсем те пĕрешкел мар, кашнин сăнне мĕнле те пулин уйрăмлăхпа палăртма тă-рăшнă. Акă пĕр каччă вăйă картин-чен тухнă та хăйпе хăй кӳлешсе ларать. Мĕн сăлтавпа? Е ушкăн йышăнман-и ăна? Тен, хăйĕн юнтар-мăш кăмăлĕпе килĕшӳсĕр ĕҫ тунă? Сăлтавсăр мар. Акă, Н.Г.Гарин-Михайловский ташăра ҫаврăнакан чăваш хĕрĕсем пирки ҫырса хăварнă йĕрке-сем: «Хăш-пĕр чухне вĕсен юрри тутлă шăршă саракан ҫарансенчен тӳпене янăраса ҫĕкленет, тăри юр-рипе пĕрлешсе ачаш та лăпкă кĕвве куҫать, иртсе кайнă вăхăта тепĕр хут ҫаврăнса пăхтарать... Мĕн вăл опе-ра? Мĕн вăл романс? Май пур-и кунашкал юрра шухăшласа ятарласа ҫырма? Иртнĕ ĕмĕрсен ҫурхи вăхă-чĕсене тата ачаш та тунсăхлă саман-чĕсене ҫакнашкал ăсталăхпа чуна тивмелле кĕвĕлесе пама пултараççĕ-и вĕсем? Икĕ пин ҫул каялла халăхăн иртсе кайнă пурнăҫне, унăн тĕрлĕ кисревĕ урлă ҫăлăнса юлнă ҫутă шухăш-кăмăлне кăтартса пама хăвачĕ пур-и вĕсен? Кунашкал юрă ҫемми-сене ятарласа шухăшласа кăларма май ҫук».

Ҫакна Владимир Агеев ҫирĕп тытса ĕҫлени курăнать. Вăййăҫсен сăнарĕнче нишлĕх те, пăхăнулăх та ҫук. Пĕр тĕнчере пурăнаççĕ вĕсем, шикленӳсĕр, иккĕленӳсĕр. Сăмахран, вăйă картинче ҫаврăнакан чăваш хĕрĕсене сăнаса тăракан Гарин-Михайловский вĕсен кашни хуска-нăвĕ нумай пĕлтерĕшлĕ, ҫыпăҫуллă пулнине асăрхать. Юлашкинчен ҫак-нашкал пĕтĕмлетӳ тăвать: «Хăш-пĕр чухне тĕлĕнмелле шухăш-кăмăлпа тĕлĕкленсе ҫӳрерĕм. Ку ачаш та вăйлă, ăнлантарса пама тем ҫитмен кăмăл-туйăм тĕлĕкĕ мар, чăнласах пулса иртнĕ чăнлăх ӳкерчĕкĕсем! Вĕсем чуна та ҫӳҫентереççĕ. Самана хыҫҫăн самана шуса иртет, хирĕҫле юхăма лекнĕ вăхăт юхан шывĕ те аваллăхран каялла ҫула тухнăн туйă-нать».

Тăван халăхăмăрăн йăли-йĕрки унăн шухăш-кăмăлне хăйне евĕрлĕ вăрттăнлăхĕпе тĕлĕнтернĕ. Пысăк культура шайĕпе аталаннă вырăс ҫыравҫипе чăвашсен паллă мар тĕнчи хăйĕн тĕшмĕшлĕхĕпе те илĕртнĕ пулас. Кунашкал экзотика унăн шу-хăш-кăмăлне авалхи чăвашсен паллă марлăхĕпе ҫавăрса илни лайăх курă-нать. Ӳнерҫĕ-и, мусăкçă-и е ҫыравҫă-и – пĕр пеклĕхре пурăнма пултарай-маççĕ. Ку ҫеҫ те мар... Кашни хăйĕн тĕнчин ӳплинче ăсталăхне туптать, ҫĕнĕлĕх шырать, пĕр пеклĕхрен хăтăлать.

Кунта Поль Гоген художник ҫул-йĕрĕ ҫинчен асăнса хăварни вы-рăнлă. Тăван ҫĕр-шывран, Франци-рен, тухса кайса ешĕл Таити утрав-ĕнче пултарулăхне урăх тавра курăм-па ҫĕнетекен художникăн сарăмсăр шăпи телейлĕ мар. Таити хĕрарăмĕ-сем – кивĕ бронза пек тĕксĕм ӳтлĕ Афродитăсемпе Венерăсем – уншăн кăмăл пусаркăчĕ тата пултарулăх шыравĕ. Поль Гогена йăлăхтарса ҫитернĕ цивилизаци те, шурă ӳтлĕ улпутсен икĕ питлĕ япшар пурнăҫĕ те художник пирĕ ҫинчен тухса ӳкет. Ют ҫĕрсен пурнăҫне тĕпчет вăл. Ҫапах та Таитири ҫынсен ултавсăр йышĕнче хăйне яланах пĕччен туять. Художник ирĕксĕрех Гоген поэт пулса тăрать. Акă мĕнле сăнласа кăтартать вăл ҫын тивĕҫне таптакан цивилизацирен тарса чун хӳтлĕхне тупнă пĕчченлĕхĕ пирки:

Мăн йывăҫ ларнă та чармакланса тӳпенелле тип туратне кичеммĕн тăсать шăм алă пек: «Эп – чĕрĕ!» –
тенĕн,
ҫĕкленчĕ йыт пырши авкаланса.
Тип йывăҫа ача чулпа та пемĕ,
ӳкмест-ҫке ĕмĕлки те, иҫмасса.
Анчах та курăк сулхăн та
ҫемҫе-мĕн,
выртаççĕ таитянкăсем канса.
Эх, кайăксен сасси! Выля
та шăхăр!
Хĕвеллĕ уçланка кĕретĕп шăпарт,
итлетĕп аякра янран юрра.
Эх, пыл пек сывлăш!
Кăн-кăвак тӳпеҫĕм
хĕвеллĕ инҫете хуллен
чĕнсессĕн –
ҫак хăрăк йывăҫ сарлака уйра
сехет йĕппи пек ма
шăвать салхуллăн?
Ăшра ҫуралчĕ, тем тесен те, чуллă
сукмак тата пĕччеНлĕхри чура.

Ҫапла кĕвĕленĕ хăйĕн сăввине Таитири Поль Гоген художник. ПĕччеНлĕхри чура чăн-чăн ăстасене нихăҫан та канăҫ паман. Тăван ҫĕрĕ ҫинче хĕрсемпе яшсен ваййипе хавхаланса тăрать пулин те – ҫамрăк Кĕҫтенттин ҫав пĕччеНлĕхри чурараН хăтăлаймасть.

Кăҫал Владимир Агеев ҫуралнăран-па 80 ҫул ҫитрĕ. Хăйĕн тĕрлĕ енлĕ ĕҫ-хĕлĕпе тăван культурăра вăл пысăк ӳсĕм турĕ. Паянхи кунсемпе аваллăха сыпăнтарса хальхи куракана чăвашлăха ăнланма вĕрентрĕ. Тавтапуҫ!



*• В.Агеевăн «Константин Иванов яш-кĕрĕм ваййинче» картини.*

■ **Николай ТЕВЕТКЕЛ**